Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

26 (7451) № ✻ Шăмат кун, 2007 çулхи мартăн (пуш) 31-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

**ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШСЕМ!**

“Ачалăх ячĕпе, ачалăхшăн” ыр кăмăллăх марафонĕ вĕçленчĕ. Пирĕн районти предприятисемпе организацисем, учреждениесем, уйрăм çынсем кăмăлтан хутшăнчĕç çак ыр кăмăллăх акцине. Ятарласа уçнă счет çине укçа куçаракансем те, ача тумтирне паракансем те йышлăн пулчĕç. Ырă ĕçĕрпе эсир нушаллă ачасен ĕмĕчĕ сирĕншĕн ют маррине кăтартса патăр. Хăвăра та паян çăмăлах мар пулсан та, нумай ачаллă, сахал тупăшлă, ăнăçсăр çемьесенчи, инвалид-ачасене пулăшма май тупрăр. Тавах сире çакăншăн.

Хаклă çыннăмăрсем! Ыр кăмăллăх марафонпах ан вĕçлентĕрччĕ. Вăл сирĕнте вĕçĕ-хĕррисĕр пулнине, кулленхи пурнăçра пулăшу кирлĕ çынсенчен эсир пăрăнса иртмессе эпĕ шанса тăратăп. Пĕр-пĕрне ăнлансан, пĕр-пĕрне пулăшсан çеç эпир малалла каятпăр. Эппин, малашне те çапла пĕр-пĕрне пулăшасчĕ. Пурин те сывлăхăр çирĕп пултăр, ĕçĕрсем ăнса пыччăр. Ыттисене ырă туни хăвăр пата та ырăпах таврăнтăр.

**Район пуçлăхĕ Ю. А. ИВАНОВ.**

## Çырăнтару – 2007

# Райхаçат редакцийĕ çырăнтару хакне чакарать

**Районти “Çĕнтерӳ ялавĕ” хаçата иккĕмĕш çур çулта илсе тăма малалла çырăнтараççĕ.**

**Апрельтен ытти мĕн пур изданисем çырăнтару хакне ӳстереççĕ пулсан, райхаçат редакцийĕ ăна чакарать. Çапла эпир ку çырăнтару кампанийĕнче кăна укçан 10656 тенкĕ çухататпăр. Çав хушăрах районти “Çĕнтерӳ ялавĕ” хаçата çырăнса илекенсен йышĕ ӳсессе шанатпăр.**

**Район хаçатне 6 уйăха çырăнса илмелли çĕнĕ хак – 147 тенкĕ те 42 пус.**

**Малашне те пĕрле пулар.**

**РАЙОН ХАÇАЧĔН РЕДАКЦИЙĔ.**

## Раççейре

# Ĕç укçи ӳсмелле

Кăçалхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен чи пĕчĕк ĕç укçин виçи хальхи 1100 тенкĕрен 2300 тенкĕне çити ӳсмелле. 2010 çул тĕлне вара чи пĕчĕк ĕç укçи пурăнмалли минимумпа танлашмалла.

Александр Жуков вице-премьер виçĕ çуллăх бюджетра наци проекчĕсене валли укçа-тенкĕ чылай уйăрассине палăртнă. Сывлăха сыхлас ĕç, вĕрентӳ, ял хуçалăхĕ пысăк пулăшу илмелле. Демографи проекчĕ валли уйрăмах нумай укçа-тенкĕ уйăрма палăртаççĕ. Çитес виçĕ çул хушшинче ача çуратассине ӳстерме тата çын вилессине чакарма укçа тăкакласси икĕ хут пысăкланмалла.

## Райадминистрацире

# Ĕç сыхлавĕпе — уйăхлăх

Район администрацийĕн пуçлăхĕн кăçалхи мартăн 27-мĕшĕнчи 121 № йышăнăвĕпе апрелĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа апрелĕн 30-мĕшĕччен районта ĕç сыхлавĕн уйăхлăхне ирттерме палăртнă. Ăна пĕтĕм тĕнчери Ĕç сыхлавĕн кунне халалланă.

Çак тапхăрта мĕн пур предприятисемпе организацисенче ĕçлекен çынсен сывлăхне упрама май паракан мероприятисем ирттермелле.

Шел пулин те, юлашки çулсенче ĕç сыхлавĕ çине вырăнсенче тимлĕх çителĕксĕр уйăраççĕ. Ертӳçĕсене ку ыйтупа та çине тăрса ĕçлемелли пирки асăрхаттаратпăр.

## “Çур пике – 2007”

# Муркаш пикисем – чи илемлисем



*Ытлари кун районти Культура çуртĕнче “Çур пике – 2007” конкурс иртрĕ. Унта вăтам шкулсенче вĕренекен 14 хĕр хутшăнчĕ. Вĕсем “Нарспи çĕршывĕ”, “Тĕнче илемĕ те – хĕрсем”, “Илем тĕнчене çăлать” тата ытти конкурссенче ăмăртрĕç.*

*Çĕнтерӳçĕ Оринин вăтам шкулĕнчи Наталья Каликова пулчĕ. Вăлах “Çур пике – 2007” ята тивĕçрĕ. Наталья район чысне апрелĕн 14-мĕшĕнче республикăри конкурсра хӳтĕлĕ. Иккĕмĕшĕнче – Нискасси шкулĕнчи Снежана Тимофеева, виççĕмĕшĕнче – Йӳçкасси шкулĕнчи Анна Кузьмина.*

**Сăн ӳкерчĕкре: Муркаш пикисем – чи илемлисем.**

## Ниме

# Кĕлĕ çурчĕ çĕкленет

Халăхпа тытăнсан кирек епле ĕçе те тума пулать иккен. Муркаш ялĕнче кĕлĕ çурчĕн тăррине витсе те пĕтерчĕç. Кунта кулленпуртăпа мăлатук сасси илтĕнсе тăрать.

Кĕлĕ çуртне тума ниме шучĕпе пулăшакансем сахал мар. Уйрăм çынсем те, предприятисем те йышлă. РФ Патшалăх Думин депутачĕ П.В. Семенов 30 пин тенкĕ, “Сеспель” ООО директорĕ В.А. Бакшаев 30 пин тенкĕ, А.Н. Вязов предприниматель 10 пин тенкĕ, район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов 5 пин тенкĕ, Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.И. Никитин 5 пин тенкĕ, К. Столярова 5 пин тенкĕ, район больницин тĕп врачĕ В.Г. Данилов 3 пин тенкĕ, И.Н. Никитин предприниматель 5 пин тенкĕ, Л.Ю. Никитина 1425 тенкĕ, Н.Е. Алексеев 1 пин тенкĕ, К.Г. Сергеева 1 пин тенкĕ, О.А. Портнов 1 пин тенкĕ, В. Никоноров 1 пин тенкĕ, А. Малышев, А. Краснов, В.Г. Васильев, Н.А. Васильев предпринимательсем блок, цемент, хăма пачĕç. Предприятисемпе учрежденисен тӳпи çапла: район администрацийĕ – 18200 тенкĕ, Муркашри тĕп больница – 16190 тенкĕ, Муркашри перекет банкĕ – 16000 тенкĕ, Пенси фончĕн районти уйрăмĕ – 1200 тенкĕ, Муркаш лицейĕ – 1 пин тенкĕ, аптека – 1100 тенкĕ, налук инспекцийĕ – 1470 тенкĕ, Муркаш шкулĕ – 2051 тенкĕ, казначейство уйрăмĕ – 1070 тенкĕ, шалти ĕçсен пайĕ – 1070 тенкĕ, пушарнăй пайĕ – 700 тенкĕ, район сучĕ – 920 тенкĕ, Роспотребнадзор пайĕ – 1270 тенкĕ, Муркаш райповĕ – 4947 тенкĕ, “Муркаш районĕнчи коммуналлă хуçалăх” ертсе пыракан компани – 1 пин тенкĕ, суд приставĕсем – 600 тенкĕ, Муркаш пасарĕ – 5 пин тенкĕ. Муркашри юсавпа техника предприятийĕ, Андреев яч. хис. хуçалăх автотранспорт уйăрса пулăшнă.

Кĕлĕ çуртне тăвас ĕç вĕçленмен-ха, пулăшас текенсене Муркаш ял тăрăхне кĕрсе тухма ыйтаççĕ.

**Хамăр инф.**

## Уйăхлăха хутшăнар

# “Пĕрлĕхлĕ Раççей” пуçарăвĕ

“Пĕрлĕхлĕ Раççей” парти ĕçне ырлакансен регионти координаци канашĕн черетлĕ ларăвĕ иртнĕ. Унăн ĕçне партин регионти уйрăмĕн политканашĕн секретарĕ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕ Михаил Михайловский ертсе пынă.

“Пĕрлĕхлĕ Раççейĕн” Чăваш Енри уйрăмĕ кăçал та республикăри хуласемпе ялсене тирпей-илем кĕртес тĕлĕшпе пуçару турĕ.

**Хисеплĕ ентешсем, Чăваш Республикинче пурăнакансем!**

**Ĕçчен чăваш халăхĕ авалтанпах хăйĕн кил-çурт таврашне, урамсене, çулсене, парксене тасалăхпа йĕркелĕхре, тирпей-илемлĕхре тытать. Çуркунне çитнĕ май ирĕлекен юр айĕнчен хĕл каçа пуçтарăннă çӳп-çаппа тасамарлăх çиеле тухать.**

**“Пĕрлĕхлĕ Раççей” политика партийĕн Чăваш Енри уйрăмĕ 2007 çулхи мартăн 30-мĕшĕнчен пуçласа апрелĕн 30-мĕшĕччен кил-çурт тавраšне, урамсен, парксен, скверсен, ача-пăча вылямалли тата спорт вăййисем иртермелли вырăнсен территорийĕсене тирпей-илем кĕртес тата юсас, йывăçсемпе тĕмсем лартас тĕлĕшпе ятарлă уйăхлăх ирттерет.**

**Çак пархатарлă ĕçре эпир – “Пĕрлĕхлĕ Раççей” парти членĕсемпе ăна пулăшса пыраканĕсем – чи хастар хутшăнакансем тата йĕркелӳçисем.**

**Республикăра пурăнакансене пурне те, ĕç коллективĕсене, çамрăксене, вĕренекенсемпе вĕсен ашшĕ-амăшне, пирĕн хисеплĕ ветерансене пирĕнпе пĕрле эрнесерен, шăмат кунпа вырсарни кун ирттерекен ĕç уявĕсене хастар хутшăнма чĕнетпĕр.**

**Тивĕçлĕ йĕркепе тасалăх, тирпейпе илем тăвассишĕн пĕрле туслă та хастар тăрăшăпăр!**

**Хамăр ĕçпе, тунă тивĕçлĕ ӳсĕмсемпе тăван Чăваш Ене чун-чĕререн юратнине тепĕр хут уççăн çирĕплетсе парăпăр!**

**“Пĕрлĕхлĕ Раççей” партин Чăваш Енри уйрăмĕн политканашĕ.**

# Тирпей-илеме хамăрăнах тумалла

***Çуркунне çитрĕ. Çанталăк ăшăтнăçемĕн районта пурăнакансен те ĕç хушăнсах пырать. Шăпах çакăнпа çыхăннă ĕçсем тавра калаçрăмăр та ĕнтĕ район администрацийĕн çут çанталăка сыхлассипе ĕçлекен тĕп специалисчĕпе Г. Г. СИМАКОВПА.***

**– Георгий Георгиевич, чи малтанах çуркуннехи ейӳпе çыхăннă ĕçсем епле пыни пирки каласан вырăнлă пулмалла.**

– Район администрацийĕн пуçлăхĕн йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн çуркуннехи ейĕве йĕркеллĕ хатĕрленсе ирттерессипе ятарлă комисси туса хунă. Çак кунсенче асăннă комисси членĕсемпе районти пур пĕвесене те пăхса тухрăмăр. Пĕтĕмĕшле илсен, лару-тăру япăх темелле мар. Асăннă комисси тĕрĕслев вăхăтĕнче хăш-пĕр çитменлĕхсене те тупса палăртрĕ. Сăмахран, Катăкуйĕнче пĕвере çурхи шыва пĕве пуçĕнчен каймалла тумалла. Хальлĕхе вăл пĕве çийĕн юхать. Кăпасра вăл çул тăрăх каять, каллех шыва йĕркеллĕ каймалла тумалла. Ытти çĕрте туса çитерейменн ĕçсем курăнмарĕç.

**– Юр кайнăçемĕн тавралăх тирпейсĕрри курăнма пуçларĕ.**

– Ку, чăннипех те, çаплах. Çавăнпа та халĕ вăхăта сая ямасăр ялсене, урамсене, предприятисемпе организацисенче ĕçлекенсен хăйсене çирĕплетсе панă территорие тирпейлемелле. Кашни уйăхăн юлашки кĕçнерни кунĕнче санитари кунне ирттересси районта ырă йăлана кĕнĕ. Çĕршыв типсе пынă май çак куна кĕтсе пурăнмалла мар, йĕри-таврари çӳп-çапа пуçтарсах тăмалла. Нумай хваттерлĕ çуртсенче пурăнакансен те çитес кунсенче çак сăлтавпа субботниксем йĕркелесен, вырăнлă пулмалла.

Çакна палăртмалла, кашни ялтах çӳп-çап кăларса тăкмалли пĕр ятарласа уйăрнă вырăн пулмалла. Магазинсемпе клубсем, ытти обществăлла вырăнсенче ятарласах çӳп-çап валли ещĕксем лартмалла.

Масарсем пирки те манмалла мар. Вĕсенче паянхи куна нумайăшĕнче картасем юсамалла, ӳксе-хуçăлса пĕтнĕ йывăççене купасем тумалла. Урамсенче йăваланса выртакан пуш кĕленчесене пуçтармалла. Умра тата, ав, пысăк праçник – Мăнкун. Унччен тирпейлеме пуçласчĕ хамăр пурăнакан, ĕçлекен вырăнсене.

**– Çуркунне çулсеренех йывăç лартатпăр. Кăçал ку енĕпе плансем мĕнле?**

– Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. А. Иванов ятарлă йышăну кăларчĕ. Унпа килĕшӳллĕн апрелĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа майăн 15-мĕшĕччен районта йывăç лартмалли тата ялсене тирпей-илем кĕртмелли уйăхлăх пулать. Çак тапхăрта чи малти вырăна çавăн пекех эрозие хирĕç кĕрешессине хумалла. Çырма-çатрасене сарăлма парас марччĕ.

Иртнĕ çул пĕтĕмпе 22 гектар çинче лартнă çамрăк хунавсене. Кăçал çуркунне, тĕпрен илсен, чĕрĕлеймен вырăнсене çĕнĕрен хунавсем лартмалла. Çавăн пекех Мăн Сĕнтĕр, Хорнуй ял тăрăхĕсенче уйрăм вырăнсене йывăççем лартасшăн, Ярославка ял тăрăхĕнче Чемейре масар çинче те, Муркашри плотина тавра та хунавсем лартмалла.

Районта пурăнакансем хальхинче те тăван тăрăхăмăра тирпей-илем кĕртес, йывăç лартас ĕçе хастар хутшăнасса шанас килет.

**– Тавах, Георгий Георгиевич, калаçушăн.**

**Л. ПАВЛОВА калаçнă.**

## Автотранспорт хуçисене пĕлме

# Транспорт çӳрессине чакараççĕ

Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн 2007 çулхи мартăн 21-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн çурхи ейӳ вăхăтĕнче çул çинчи хăрушлăха, çулсем пăсăлассине чакарас тата çулсем çинче искусствăлла сооруженисене сыхласа хăварас тĕллевпе район администрацийĕн пуçлăхĕ ятарлă йышăну кăларнă. Унпа килĕшӳллĕн 2007 çулхи мартăн 26-мĕшĕнчен тытăнса майăн 10-мĕшĕччен пĕтĕмĕшле 7 тонна е ытларах таякан автомашинăсем район харпăрлăхĕ шутланакан автоçулсем çинче çӳрессине чакараççĕ.

Капиталлă строительство, архитектура, тата пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕ çулсем çинче ятарлă паллăсем вырнаçтарма тивĕç.

7 тонна ытла, анчах та 25 тоннăран ытла мар таякан автотранспорт валли çул çӳреме тӳлевлĕ пропусксене централизациленĕ майпа ЧР Градостроительство тата обществăлла инфраструктурăна аталантарассин министерстви парать. Тӳлевсĕр пропусксене çунтармалли-сĕрмелли материалсем турттаракан, заводсенчен ял хуçалăх техники тиесе килекен, медицина тата ветеринари препарачĕсем, вăрлăх турттаракан тата ытти хăш-пĕр ятарлă автомашинăсем валли кăна параççĕ.

Районти шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхне Е.Д. Макарова районти çул-йĕр хăрушсăрлăх комиссийĕпе пĕрле вырăнти çулсем çинче талăкĕпех дежурство тăрассине йĕркелеме хушнă.

## Юбилей

# Саламлатпăр



Хисеплĕрен те хисеплĕ юратнă çыннăмăра – Отарккă ялĕнче пурăнакан **Анна Ивановна ИВАНОВАНА** 70 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн, чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр.

Мĕн ачаранах эсĕ ял-хуçалăх ĕçĕнче пиçĕхнĕ, кайăк-кĕшĕк пăхнă çĕрте, районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станцинче вăй хунă. Хăть мĕнле ĕç шанса парсан та ăна эсĕ вăхăтра, тĕплĕ, тирпейлĕ тума тăрăшнă. Ялйышра яланах хисепре пулнă.

Паянхи кун та эсĕ ĕçчен те тăрăшуллă пулнишĕн эпир çав тери савăнатпăр. Аслă Турă сана çирĕп сывлăх, нумай çул пурăнма телей патăрччĕ. Ватлăху канлĕ пултăр. Пирĕншĕн яланах эсĕ ырă кăмăллă пулнă, малалла та çаплах пул.

**Саламлаканĕсем: аппăшĕ, шăллĕпе мăшăрĕ, вĕсен ачисемпе мăнукĕсем, кинĕсем, пиччĕшĕн 3 ачи, вĕсен мăшăрĕсен ачисем, тăванĕсем.**